**Шурă хут**

Мана, туятăп, шурă хут кĕтет
сĕтел çинче.
Вăл шурă пĕлĕтĕн туртать
хăй патнелле...

Унăн мана лартас пулать те хăй çине,
илсе тухас пулать тĕнче уçлăхнелле...
Вăл шурă пăрахут, эп çулçӳревçĕ,
вăл тӳпере те, тинĕсре те иштерет,
Мĕскер курас килет? – веçех тивĕçтерет.

Çил-тăвăла,
аслатине те лексе курнă –
Витĕр лачкам йĕпениччен...
Кайран кулнă иксĕмĕртен —
Хĕвел ал тупанне ларса типĕниччен...

Е тинĕс тĕтринче çĕтсе кайсан
хум кăпăкĕ çинче
Ярăнса тухнă çырана,
ун хĕррипе
Çара уран çатлаттарма...
Пуш хир хăйăрĕнче те
лакса ларнă,
Тăрă куççуль тăкса çăлкуç шăтарнă,
ун çумĕнче йăмра лартса хăварнă,
Пĕрре-тепре – сулхăнĕнче канма,
çăл шывĕпе ăша, пите уçăлтарма...
Вĕсем патне пыраççĕ туйăм картисем,
пушă хир урлă каçакан
ĕшеннĕ шухăшсем...

Пуçа тайса ларатăп шурă хутăм умĕнче,
кĕнекесем уçатăп, вĕсенче – тĕнче...
Тĕнче телейĕпе асапĕ
сийлĕн-сийлĕн уçаççĕ
Тĕнчери лапра тата таса ĕçсен
Пĕлтерĕшне, сĕмне...

Паян пире кĕтет çурхи ĕшне,
чĕнет кĕрсе курма
Кашни папка, кашни çеçке ăшне,
пăхса ларма –

Ăҫта вырнаҫтараҫҫӗ йывăҫ-курăксем
ылтăн та кӗмӗл
вăррипе тӗшшийӗсен
Ăшă, черченкӗ сăпкине...

*Асамат, С. Шурă хут / С. Асамат // Чăваш литературин антологийӗ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 542.*